**Çиле хирĕç**

Вăрăм çул сăртĕнчен
Иртрĕм çеç талпăнса,
Самантрах çут тĕнче
Кайрĕ ăмăрланса.

Çитрĕ кĕç çил-тăман
Ахăрса, шăхăрса...
Май та çук куç уçма! –
Юр хурать хупласа.

Çул та çук, йĕр те çук,
Кĕрт кăна умăмра.
Юр ашма çеç кун-çул
Пӳрнĕ-им-ха вара?

Халăм пĕтрĕ тăнчах,
Çил тулать урнăлла.
Утăмлатăп çапах
Вăй пухса малалла.

Шутламастăп вуçех
Çаврăнма каялла,
Ăмăрт кайăк вĕçет
Çиле хирĕç ялан!

*Галкин, А. Çиле хирĕç // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 307.*